# “Эсир пире асран кăлариччен пурăнатпăр эпир...”

**Пĕтĕм Раççейри халăх фрончĕн “Герой ятне – шкула” проекта Çĕмĕрле районĕнчи Юманайри вăтам шкул та хутшăннă. Акцие Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 72 çул çитнине тата республикăра иртекен Амăшĕпе Ашшĕн çулталăкне халалланă – кунти шкула вĕрентӳпе культурăра, общество ĕçĕнче нумай çул ĕçленĕ вăрçă тата педагогика ветеранĕн Севастиан Архипов ятне панă.**

Палăртнă вăхăтра Юманай çыннисемпе шкулта вĕренекенсем митинга пухăннă. Раççей тата Чăваш Республикин гимнĕ янăранă май Çĕнтерӳ Ялавне илсе тухнă. Аслă Çĕнтерӳшĕн çапăçса пуç хунисене асăнса пĕр самант шăп тăнă. Асăну митингне Çĕмĕрле район администрацийĕн ертӳçи Лев Рафинов тата Юманай ял тăрăхĕн ертӳçи Олег Яковлев уçнă. “Çĕмĕрлесем район, республика, çĕршыв историйĕнче йĕр хăварнă паттăрсене асрах тытаççĕ, – палăртнă Лев Геннадьевич. – Пирĕн шкулсенче çарпа патриотизм воспитанийĕ тивĕçлĕ пурнăçланса пырать”.

ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Леонид Лукин шкула Севастиан Архипов ятне пани паттăрсене, республикăри паллă çынсене, Аслă Çĕнтерĕве асра тытма, ăрусен хушшинче кĕпер хывма пулăшнине палăртнă.

Севастиан Архипов Элĕк районĕнчи Тури Вылă ялĕнче нумай ачаллă хресчен çемйинче çуралнă. “Эпир ентешĕмĕрпе чăнласах мăнаçланатпăр, – тенĕ “Элĕк ачи” ентешлĕх ертӳçи Владимир Иванов. – Вăл историллĕ нумай пулăма хутшăннă, пултаруллă педагог, ăслă ертӳçĕ, общество паллă ĕçченĕ пек палăрнă. Паллах, Севастиан Михайловича пултаруллă ентешĕсем-çыравçăсем Никифор Васанкка, Александр Артемьев, Герасим Харлампьев, Илле Тукташ хавхалантарса пынă”.

Çĕмĕрле тата Пăрачкав районĕсен, Çĕмĕрле хулин çар комиссарĕ Олег Петров Севастиан Михайлович паттăрлăхĕ çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăнине палăртнă. Юманай шкулĕн директорĕ Галина Федорова паттăр ячĕ яваплăха ӳстернине, хăйсем ăна тивĕçмешкĕн тăрăшассине çирĕплетнĕ.

Асăну митингне Севастиан Архиповăн мăшăрĕ, пегагогика ĕçĕн ветеранĕ 88 çулти Ольга Архипова хутшăннă. Вăл мăшăрне çапла чысланăшăн, патриотизм проектне пурнăçа кĕртнĕшĕн, истори акцине хастар хутшăннăшăн Çĕмĕрле район администрацине тата шкул коллективне тав тунă. “Ан манăр: эсир – Çĕнтерӳ еткерçисем! Çавăнпа та Аслă вăрçă илсе килнĕ асап-терте, ирĕклĕхшĕн пынă çапăçусене, паттăрсен ячĕсене асрах тытăр. Çавăн чухне кăна эпир вăйлă! Эсир пире асран кăлариччен пурăнатпăр эпир...”

Мероприятие пухăннисене Чăваш Опера тата балет, Çамрăксен театрĕсен артисчĕсем, “Служу Отечеству” ансамбль солисчĕсем саламланă. Юманай шкулĕнче вĕренекенсем те хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарнă.



АРХИПОВСЕН çемье архивĕнчи сăн ӳкерчĕк.

**Севастиан Архипов паттăрлăхпа хăюлăхшăн I тата II степень Тăван çĕршыв вăрçин орденĕсене, Хĕрлĕ Çăлтăр орденне, нумай медале тивĕçнĕ. Курск пĕкки, Харьков, Луцк, Лубна сывăхĕнче пынă çапăçусене, Белгорода ирĕке кăларнă çĕре хутшăннă. 1944 çулта – Рашков, 1945 çулта Скальмежиценово хулисен /Польша/ коменданчĕ пулнă. Висĕ хутчен аманнă.**

**Севастиан Архипов пĕтĕм пурнăçне ачасене вĕрентес ĕçе халалланă. Архиповсен династийĕн педагогикăри пĕтĕмĕшле стажĕ – 550 çул ытла.**

**Севастиан Архипов Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Штанашри çичĕ класлă шкулта вĕреннĕ хыççăн Етĕрнери педучилищĕре ăс пухнă. Çамрăк специалиста Юманайри шкула кĕçĕн классене вĕрентме янă. Вăрçă хыççăн пĕр вăхăт Тутарстанра ĕçленĕ, унтан Юманая таврăннă. 1954 çулта куçăмсăр майпа Шупашкарти учительсен институтĕнчен, 1962 çулта Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă. Чулхулари пединститутра пĕлĕвне тарăнлатнă. Юманай шкулĕн директорĕнче 20 çул ĕçленĕ.**

**М.МИХАЙЛОВА.**

## Тури Вылти Архипов Севастиан

/Баллада/

**Юрий СЕМЕНТЕР**

Аннесем кăмакана çăкăр хывнă майлах
Севастьян яшлăхне вăрçа хыврĕ йăлтах.
Пĕр пайне вăл хăварчĕ Мускав патĕнче,
Тепĕр пайĕ çӳрет Сталинград уйĕнче.

Ыттисем – Курск енче. Венăра, Прагăра,
Рейхстаг çийĕн вĕл-вĕл вĕлкĕшет
ялавра...
Ма хитре çуркуннен ытарми йăл кулли?
Ма тесен вăл – Çĕнтерĕвĕн ырă палли!

«Севастьян! – ыталатчĕ ăна ротăри
молдаван. –
Эсĕ – Атăл çинчи парăнман арăслан.
Çапăçса чунсăрлатрăн фашист хурахне,
Эс кăлартăн тӳрре çут тĕнче шанăçне».

«Çук, Ион, – тет ăна Элĕк çĕрĕн каччи, –
Пирĕн туслăх – ак мĕн Çĕнтерӳ туптави».
Чăнкă-чанкă тăвать çичĕ орден-медаль,
Çĕмĕрле хыса юлчĕ, хыса юлчĕ Шăхаль.

Тăр-тăри вирхĕнсе çĕкленет йăвинчен, –
Севастьян килсе çитрĕ тĕнче вăрçинчен!
Акă кивĕ хапха, Тури-Вылăм, салам!
Чим-ха, мĕн ку? Çуннă, кĕлленнĕ урам...

Вăрçăра та пушарччĕ, ялта та пушар,
Эй, аттеçĕм, аннеçĕм, хирĕç тух,
сасă пар!
Çĕнтерсе киле килчĕç пулсан ачăрсем
Çĕнĕрен çĕкленеççĕ тăван çуртăрсем!